**Чăваш Республикин Президенчĕн Указĕ хыççăнхи шухăшсем**

# Культура вучахĕсене чăннипех çунма пулăшĕ



Чăваш Республикин Президенчĕн Н.В. Федоровăн “Чăваш Республикинче ялти культура учрежденийĕсене аталантарас енĕпе пурнăçламалли мерăсем çинчен” Указĕ маншăн чăннипех те питĕ савăнăçлă хыпар пулчĕ. Тинех культура ĕçченĕсем те хăйсем культура сферинче ĕçлетпĕр, тесе мăнаçланма пуçлаççĕ пулĕ. Атту ку таранччен учительсемпе сывлăх хуралĕнче ĕçлекенсем çине ăмсанса пăхаттăмăрччĕ. Вĕсене наци проекчĕсем тăрăшса, хавхаланса ĕçлеме мĕн таран условисем туса панине пурте куратпăр вĕт. Тинех эпир те ялти клубсенче ĕçлекенсем лăштах! сывласа яратпăр ĕнтĕ. Асăннă указ тăрăх, культура ĕçченĕсене те ĕç укçине хăпартма пăхнă. Чăннипех те, 2-3 пин тенкĕ ĕç укçишĕн паян ялти клуба çамрăксем ĕçлеме килесшĕн те мар. Тепĕр чух алă усăнни те пулать. Ĕçĕ çăмăл мар пирĕн: харăсах психолог та, учитель те, хĕрсе кайнă çамрăксене чарма милици ĕçченĕ те пулма тивет тепĕр чух. Кашни çынпа уйрăммăн калаçса вăл е ку мероприятие явăçтармалла. Ку пĕрре.

Тепĕр самант. Паян магнитофон ярса ташă каçĕсем ирттерекен клубсем те çук мар пулĕ-ха районта. Ăçта кайса кĕрес? Урăхла май çук. Президент указĕ вара пире паянхи кун ыйтакан аппаратурăпа тивĕçтерме шантарать. Чăваш Республикин культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политики тата архив ĕçĕн министрĕ Н.И. Володина хăйĕн пĕрремĕш çумĕпе В.С. Бондаревпа иртнĕ эрнере хамăр патăмăрта пулса курнă чух та çакна шантарсах каларĕ. Пирĕн районти 57 клубран 16-шĕ малашне база шайĕнче пулмалла, ыттисем – филиалсем. Урăхла, эпир хăнăхнă чĕлхепе каласан, тĕслĕх клубсем пулаççĕ районти 16 клуб. Пирĕн Культура çурчĕ те çав шутрах. Асăннă указпа килĕшӳллĕн тĕслĕх клубсем тума юсав ĕçĕсене ирттермелле. Ку ĕçре пире районтан пулăшаççĕ, республикăран вара çутă, сасă, музыка оборудованийĕсемпе, компьютерсемпе тивĕçтереççĕ.

Указ кĕске вăхăтрах пурнăçланасси пирки ман пĕр иккĕленӳ те çук. Тĕслĕх библиотекăсене те кĕске вăхăтрах туса пĕтертĕмĕр районта. Чăваш Республикин Президенчĕ тĕслĕх библиотекăсем тумалли çинчен калакан указĕ пулман пулсан, район администрацийĕнчен пулăшман пулсан, паян кун та пĕр улшăну та пулас çукчĕ. Клубсем пирки каларнă указ хыççăн татах та хавхаланса ĕçлес килет. Ĕçлесен результачĕ пулнине хамăр çинчех туйрăмăр эпир. РФ шайĕнче тĕслĕх клубсем тăвассипе ирттернĕ проектра çĕнтернипе ĕнтĕ хамăрăн Кашмашри Культура çуртĕнче палăрмаллах ырă улшăнусем пулса иртрĕç. РФ шайĕнчен те, республикăран та, район бюджетĕнчен те нумай укçа-тенкĕ парса пулăшрĕç. Çĕнĕ йышши аппаратура, сасă тата çутă техники илтĕмĕр, юсав ĕçĕсене туса ирттертĕмĕр, Культура çурчĕ тавра тирпей-илем кĕртрĕмĕр, ун патне çул турăмăр. Паян кунта халăх театрĕ, юрăпа ташă ансамблĕ, 9 кружок ĕçлет.

Паян пĕр-пĕр яла концерта кайма пуçтарăнсан, транспорт шыраса хăшкăлатăн. Тупсан та тăкакне темпе саплаштармалла. Ку енĕпе те пысăк улшăнусем кĕтеççĕ иккен пире Президент указĕ тăрăх. Автоклубсем пирĕн пурнăçа кĕме пуçлаççĕ. Харăсах мĕн тĕрлĕ проблемăна татса парать çак указ. Çавăнпа пĕрлех кадрсен проблемине те. Кун пекех пулсан, шкултан вĕренсе тухакансем, юристпа врача çеç мар вĕренме кайĕç, культура ĕçченĕ пулас текенсем те йышланĕç. Хальлĕхе вара ялти клубсемпе Культура çурчĕсенче çамрăк специалистсем çителĕклех теме çук.

Тĕп саманчĕ çакăнта тесе шутлатăп: Чăваш Республикин çак указĕ Культура вучахĕсен ĕçĕн содержанине анлăлатма, пахалăхне палăрмаллах лайăхлатма пулăшать. Çакă хăй тепĕр палăрăма çуратать: çамрăксем телевизор умĕнче ăсхакăла сиен кӳрекен тĕрлĕ фильмсем пăхса лармĕç, ялти клуба е Культура çуртне васкĕç. Урăхла каласан, Чăваш Республикин Президенчĕн Н.В. Федоровăн Указĕ Культура вучахĕсене чăннипех те ялкăшса çунма пулăшасси пирки пĕрре те иккĕленместĕп. Çакă тепĕр хутчен пирĕн республикăра, çĕршывра ял çыннисемпе хула çыннисем хушшинчи уйрăмлăха пĕтернине, çынна çын вырăнне хунине çирĕплетсе парать. Ял малашне çăмăллăнах сывласа ярĕ: газ кĕртсе пачĕç, çул туса пачĕç, вырăнтах сывлăха сиплеме майсем туса пачĕç, тĕнче хыпарĕпе паллашма ватти-вĕтти пултарать – кашни библиотекăпа шкултах Интернета тухма пулать. Ĕçлесе ывăннă хыççăн малашне чăннипех те ялти Культура керменĕсене пуçтарăнăпăр. Тавах Президента çак Указшăн та, ытти çăмăллăхсемшĕн те. Тавах Раççей Федерацийĕн Президентне В.В. Путина çĕршыва çак аталану çулĕпе ертсе кайнăшăн.

**Р. НИКОЛАЕВА,**
**Кашмашри Культура çурчĕн директорĕ.**

**Сăн ӳкерчĕкре: Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политики тата архив ĕçĕн министрĕ Н.И. Володина тата район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов районти ача-пăча библиотекин ĕçĕпе паллашаççĕ.**

**Сăмах – район пуçлăхне**

# Айккинче пăхса тăрсан, нимĕн те пулмĕ

**(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр.).**

Юлашки вăхăтра халăх сывлăхне сыхлас сферăра та нумай ырă улшăну пулса иртрĕ. Пĕтĕмĕшле практика врачĕн уйрăмĕсем 6 çитрĕç. Кăçал Юнкăра та çакнашкал уйрăм уçălмалла. Пуçламăш звенори медицинăпа санитари пулăшăвне аталантарни çынсене вырăнтах сиплеме майсем туса парать. “Сывлăх” наци проекчĕпе килĕшӳллĕн района паянхи кун ыйтакан диагностика тата медицина оборудованийĕсем илсе килнĕ, çĕнĕ “Васкавлă пулăшу” машинисем килнĕ. Асăннă наци проекчĕ çавăн пекех ача амăшĕсен сывлăхне сыхламалли çула уçса пачĕ. Пирĕн районта чăннипех те пысăк квалификациллĕ тухтăрсем ĕçленипе те эпир мăнаçланатпăр. Паян вĕсем çынсене сыватас тесе йăлтах тăваççĕ. Районти медицина ĕçченĕсем пилотлă проекта хутшăнни те пирĕн районта медицина пулăшăвĕн пахалăхĕ лайăххи пирки калать.

Районти вĕрентӳ учрежденийĕсенче те ачасене тарăн та пахалăхлă пĕлӳ пама мĕн пур условисем пур. “Вĕрентӳ” наци проекчĕпе килĕшӳллĕн кăçал Нискассипе Москакасси шкулĕсем РФ Президенчĕн Грантне – 1 миллион тенке тивĕçрĕç. Муркаш шкулĕ – Чăваш Республикин Грантне – 200 пин тенке. Районти пур вĕрентӳ учрежденийĕсенче те паян Интернета тухаççĕ. Районти кашни 16 вĕренекен пуçне 1 компьютер тивĕçет. Вĕрентӳ учрежденийĕсене класс комплекчĕсем, литература, çĕнĕ оборудованипе сĕтел-пукан илсе килнĕ. Пурлăхпа техника бази палăрмаллах пуянланчĕ. Ачасене турттарма района тепĕр 3 автобус (Çатракасси, Ярапайкасси, Оринин шкулĕсем валли) тата пĕр микроавтобус (Чуманкасси шкулне) килчĕ.

Районти культура учрежденийĕсем те йĕркеллĕ ĕçлесе пыраççĕ. Çăмăлах пулмарĕ пулин те, районта пĕр культура учрежденине те хупман. Чăваш Республикин Президенчĕн тĕслĕхлĕ библиотекăсем уçмалли çинчен калакан Указĕпе килĕшӳллĕн кăçал кăна 14 тĕслĕх библиотека уçрăмăр. Çапла майпа вĕсен йышĕ 30 çитрĕ.

Çынсен канăвне йĕркелес тата илемлетес тесе çулсеренех районта пултарулăх ушкăнĕсен конкурсне ирттеретпĕр. Кăçал унта çакнашкал 49 ушкăн хутшăнчĕ. “Халăх коллективĕ” ята çĕнсе илнĕ коллективсем 11-шĕ те кăçал хăйсен ятне хӳтĕлесе хăварчĕç.

Культура учрежденийĕсем çавăн пекех Раççейри, республикăри программăсене хутшăнаççĕ. Раççей шайĕнче тĕслĕх клуб йĕркелессипе ирттернĕ программăра çĕнтерсе Кашмашри культура керменĕ валли 520 пин тенкĕлĕх оборудовани килчĕ. Унсăр пуçне республикăран тепĕр 155 пин тенкĕ куçарса пачĕç. Район бюджетĕнчен клуб патне çул туса панă тата юсав ĕçĕсем ирттерме тепĕр 200 пин тенкĕ укçа парса пулăшнă.

Районта тĕрлĕрен спорт ăмăртăвĕсем ирттересси ырă йăлана кĕнĕ.

**– Çитĕнӳ е çитменлĕх ытларах вырăнсенче ĕçленинчен килет. Ял тăрăхĕсен хăйсен ĕçне кăтартмалăх вăхăт пулчĕ. Мĕн калама пултаратăр вĕсен ĕçĕ пирки?**

– 131-мĕш федераллă саккун ял тăрăхĕсем çине пысăк яваплăх хучĕ. Малтан район шайĕнче татса панă нумай ыйтăва вырăнсенче татса пама пуçларĕç. Пур çĕрсемпе, муниципаллă çуртсемпе пĕлсе усă курасси, чрезвычайлă лару-тăруран сыхланасси те вĕсем çине куçрĕ. Ял тăрăхĕсен вырăнти бюджечĕпе, территорин инфраструктурине аталантарассипе çыхăннă ыйтусене те ял тăрăхĕсенех татса памалла. Культура çурчĕсемпе клубсен, библиотекăсен ĕçĕсене, спорт мероприятийĕсене йĕркелесси, территорие хăт кĕртесси, урамсене электричество çути кĕртесси т. ытти те. Район администрацийĕ вĕсене ку тĕлĕшпе пулăшса пырать. Тӳрех мар пулин те, ял тăрăхĕсем вырăнсенчи халăх суйланă влаç пулнине туйма пуçларĕç, ĕçе пысăк яваплăхпа туса, ял халăхĕн ыйтăвне тивĕçтерессишĕн тăрăшаççĕ. Ĕçĕ нумай ял тăрăхĕсен, тепĕр чухне специалисчĕсем ĕçлесе те çитереймеççĕ. Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Г.П. Мазиков тăрăшнипе культура объекчĕсене çине-çинех хута ячĕç. Малтан Шупуçĕнче, унтан Вомпăкассинче кивĕ çуртсенчен чипчипер культура вучахĕсем туса хучĕç. Çавăн пекех Мăн Сĕнтĕрти культурăпа кану центрне те йĕркелерĕç т. ыт. те. Ял тăрăхĕсенче тĕслĕх библиотекăсем тунă çĕрте питĕ хастар пулчĕç ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем. Ку тĕлĕшпе çавăн пекех С.Н. Иванова (Йӳçкасси), Н.П. Александрова (Шетмĕпуç), А.С. Сурикова (Оринин) тата ыттисене ырăпа асăнмалла. Ял халăхне те тав сăмахĕ калас килет ку тĕлĕшпе: ăнланнăшăн, пулăшнăшăн. Çатракасси ял тăрăхĕнче акă ял çыннисем тĕслĕхлĕ библиотека уçнă çĕрте укçаран та пулăшрĕç. Пысăк тав ку тăрăхра пурăнакансене.

Ял халăхĕ туса илнĕ ял хуçалăх продукцине вырăнтах вырнаçтарма майсем туса парас ыйту та çивĕч тăрать. Лава вырăнтан тапратма çăмăлах пулмарĕ. Паян районта 18 ял хуçалăх кооперативĕ тунă. Анчах та пурте вĕсем йĕркеллĕ ĕçлеççĕ теме çук-ха. Лайăх ĕçлекенсенчен Юнкă ял тăрăхĕнчи ял хуçалăх тата кредит кооперативĕсене ырăпа палăртмалла. Ку ĕçе малалла та туса пырăпăр.

Пурнăçланисем нумай пулсан та, тумалли тата та нумай-ха. Çавăнпа та ял тăрăхĕсенчи специалистсен вырăнти ял халăхĕпе пĕр-пĕрне ăнланса, пĕр-пĕрне пулăшса ĕçлесе пымалла. Хамăр пурăнакан яла, урама, кил умне тирпейилем кĕртесси те, вырăнти пурнăça интереслĕрех тăвасси те – йăлтах хамăртан ытларах килет. Аякран килсе йĕркеллĕ пурнăç туса парасса кĕтмелле мар. Хамăрăнах – район администрацийĕпе ял тăрăхĕсем, районти халăх пĕр шухăшлă пулса, çĕршыв, республика паян утакан çулпа пĕрле малалла утмалла, ĕçлемелле.

**– Юрий Александрович, район администрацийĕн яваплă ĕçченĕсем те вырăна тухса тăтăшах халăхпа тĕл пулаççĕ. Çакă районта пурăнакансене мĕнле ыйтусем кăсăклантарнине пĕлме çеç мар, ăна вăхăтра таса пама май парать. Мĕнле ыйтусем хускатаççĕ паян вырăнсенче?**

– Вырăнсенче паян ял хушшине çул сарас ыйту хумхантарать. Паллах, пур ĕçе те пĕр кунтах тума май çук. Халăха ăнланма ыйтасшăн. Аса илер-ха, районти ялсем патне пыракан çулсене, малтан палăртнă тăрăх, 2015 çул тĕлне туса пĕтермелле пулнă пулсан, çитес çул ку ĕçе вĕçлетпĕр. Ялсем хушшинчи çулсене те тăватпăр, проектсене хатĕрлеме пуçланă.

Тепĕр çивĕч ыйту – шыв ыйтăвĕ. Паян халăха таса шывпа тивĕçтермелли программа, тĕпрен илсен, кăнтăр районĕсенче пурнăçланать. Çитес çулсенче пирĕн районта та ку ĕç вырăнтан тапранма кирлĕ. Вырăнсенче проектсем хатĕрлеме пуçланă. Экспертиза витĕр тухнă проектсем кăна программăна кĕреççĕ. Анчах та пуррине упрамалла. Ăçта çăлсем пур, вĕсене пăхса тăрса сыхласа хăварма тăрăшмалла.

Паян ăна туса парăр, ку кирлĕ, тенипе малалла кайма çук. Вырăнсенче те питĕ активлă ĕçлемелле. Кирек епле ыйтупа та. Вăрманкас Хачăкра акă шыв пачах та пулман. Ку ыйтăва татса парассипе ял старости Олег Захаров питĕ тăрăшрĕ. Вырăнтан тăрăшнине пула, район администрацийĕ çине тăнипе çак ялти шыв проблемине татса пама республикăран 5 миллион тенкĕ килчĕ. Çавăнпа та шыв пăрăхĕсем валли проектсем тăвас ыйтăва вырăнсенче кун йĕркинчен кăлармалла мар.

Кунта çакна каласа хăвармалла. Вырăнсенче кулленхи тĕрлĕ ыйту хускатаççĕ районта пурăнакансем. Панă ыйту мĕнле татăлнине те, паллах, пĕлес килет. Çавăнпа та район администрацийĕн ĕçченĕсем малашне тăтăшах район хаçатĕнче сăмах илĕç. Унта вĕсем халăх хускатнă вăл е ку ыйту мĕнле татăлни, татăласси пирки те уйрăммăн чарăнса тăрĕç.

**– Паян вăхăта сая ямасăр татса памалли ĕçсем тата вĕсене татса памалли çул-йĕрсем мĕнлисем?**

– Кашни отрасльтех пур вĕсем – татса памалли ыйтусем. Ял хуçалăхĕнче çĕр ĕç культурине тытса пымалла. Производство технологине пăхăнса, минераллă, органикăллă удобренисемпе, имçамсемпе эффективлă усă курмалла, çĕнĕ техника туянмалла, кадрсен ыйтăвне татса памалла. Выльăх-чĕрлĕх отраслĕнче малта пыракан çĕнĕ технологисене пурнăçа кĕртмелле, тивĕçлĕ ĕç условийĕсем пулччăр, ял ĕçченĕсем тивĕçлĕ ĕç укçи илме пултарччăр– акă мĕн тĕп тĕллев пулмалла пирĕн. Депутатсен районти Пухăвĕнче районти ял хуçалăх отрасльне малалла аталантармалли ятарлă программа йышăнтăмăр. Унта шăпах ял хуçалăхне йывăрлăхран кăлармалли çул-йĕре палăртрăмăр.

Промышленность предприятийĕсенче те май пур таран ытларах продукци туса илме пур майсемпе те ĕçлемелле. Пирĕн малалла та ял халăхне çурт лартма пулăшмалла, коммуналлă пулăшусене вăхăтра тата пахалăхлă памалла: халăх пĕр кăлтăксăр кашни кун усă курма пултартăр вĕсемпе. Çавăн пекех халăх сывлăхне сыхлассинче те, вĕрентӳ сферинче те – пур çĕрте те тата та тăрăшса ĕçлемелле. Ĕçлекен валли паян малалла туртăнмалли майсем çителĕклех.

Çитес вăхăтрах татса памалли тепĕр ĕç вăл – Чăваш Республикин Президенчĕн кăçалхи ноябрĕн 9-мĕшĕнчи Указĕпе килĕшӳллĕн ялти клубсене тĕслĕхлĕ клубсем туса хурассипе çине тăрса ĕçлемелле. Çитес çул Республика кунне пирĕн районта ирттерме йышăнни пире чыс кӳрет. Çавăнпа пĕрлех малалла тата та туртăнма хистет. Çавăнпа та пирĕн пурин те хамăрăн ĕç вырăнĕнче çине тăрса вăй хумалла, хамăрăн пурнăça хамăрăнах пуянлатмалла, интереслĕрех тумалла.

**– Юрий Александрович, Республика кунне хатĕрленес ĕç мĕнле пырать?**

– Республика кунне хатĕрленсе ирттерме районта ятарлă ĕç планне çирĕплетнĕ. Унпа килĕшӳллĕн уява район центрĕсĕр пуçне хăш ял тăрăхĕсенче ирттерессине суйласа илессипе конкурс йĕркеленĕ. Ăна çитес эрнере пĕтĕмлететпĕр. Районта предприятисемпе организацисен çурчĕсене юсас, илемлетес, хăт кĕртес ĕç пуçланнă. Ял тăрăхĕсенче те килçурта, пахчана тирпейлесси, чечексем лартса илемлетесси пирки халех шутламалла.

Çĕр ĕç культурине тивĕçлĕ шая лартассипе те ĕçлемелĕх пур пирĕн. Хамăр ялсемпе пĕрлех çул хĕррисене те хамăрăнах тирпейлемелле. Республика кунĕ тĕлне район центрĕнчи физкультурăпа спорт комплексне туса пĕтерме, Муркашри Культура çурчĕпе тĕп библиотекăна реконструкцилеме, районти историпе краеведени музейĕн çуртне юсаса, унта тури чăвашсен костюмĕсен залне йĕркелесе çитерме палăртнă.

Уяв тĕлне республика пĕлтерĕшлĕ çулсене юсаса пĕтернипе пĕрлех Муркашри нумай хватерлĕ çуртсем патне кĕрекен çулсене туса йĕркене кĕртмелле, ача-пăча площадкисем ăсталамалла, хамăр район çинчен калакан, хамăр районти паллă çынсем çинчен кĕнекесем кăларма палăртнă тата ытти те.

Кĕскен каласан, уява хатĕрленсе ирттермелли ĕçсем нумай, уяв программи те питĕ анлă. Çавăнпа та кунта пирĕн пурин те пĕрле тăрăшмалла. Айккинче пăхса тăрсан, пирĕн яла, района хамăрсăр пуçне никам та хăт кĕртмĕ. Çак ĕçсене уява хатĕрленсе кăна ирттерместпĕрçке. Хамăршăнах лайăх çакă. Апла пулсан хамăршăнах хамăрах тăрăшасчĕ. Тăрăшакана паян патшалăх та пулăшать. Айккинче тăрса юлмасан, çĕршыва, республикăна ертсе пыракансемпе пĕрле аталану çулĕпе утсан, пурнăç шайĕ татах та ӳсĕ, малашлăх çулĕ те уçăмлăрах пулĕ. Юлашки çулсенче улшăнусем нумай пулчĕç, ĕçĕсем те куç умĕнчех.

**– Тавах, Юрий Александрович, калаçушăн.**

**Л.ПАВЛОВА калаçнă.**